Хусанкайпа çул-çӳреме аван.
Санпа вăл сăвăç, юрăç та тăван:

Ят-сумлăскер — санпа пĕр тан тытать,
Чун çуннă чух — шӳтлет те — пусарать.

Çуралнă пуль вăл çул çынни пулма,
Хăй ăшшипе çынна çунат хушма.

Йыш умĕнче çĕклет чăваш ятне...
Халăх ĕçченлĕхне, сăпайлăхне,

Мĕн авалтан юрра юратнине,
Чăн туслăха ăшра упранине

Вăл пăхнинчен илетĕн ăнланса,—
Ун куçĕ ту çăл куçĕ пек таса.

Çынна çини ун çук чĕлхи çинче,
Чул пытанса выртмасть ун хĕвĕнче.

Кайран валли картса хуни те çук,—
Пит уçăмлă та тӳрĕ калаçу...

Мĕн ĕмĕре çапла юлташ пулсан,
Эс пăрăнмăн нихçан та тӳр çултан,

Усалпала ырра час уйăрса,
Çынна куçран эс пăхăн йăл кулса.

Веймар, 1964,
сентябрь